27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 АВГУСТ 13 ВЫРСАРНИКУН 159(6654) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ПСКОВ хулинчен хĕвеланăçнерехре та та кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çĕнĕрен наступлени пуçласа янă, тăшман оборонине татса, 25 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 70 километр таран сарнă. Малалла тапăнса пынă çапăçусенче пирĕн çарсем Эстони ССР-ĕн уезд центрне ПЕТСЕРИ (ПЕЧЕРЫ) хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшмана çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ЛИТОВИЧИ, ИВАНОВО БОЛОТО, РАГУЗИНА, ВЫММОСКИ, КЮЛЛАТОВА, ОБИННИТСА, ВАСЛАМЯЭ, ЛИНЦИ, КУКСИНА, МЕКСИ, ВИТКА, ТИЙЛИКЕ, ЛЕЯМАНИ, СТУКОЛОВА ятлă пысăк халăх тата ЛИВВАМЯЭ, ПЕТСЕРИ ятлă чугун çул станцийĕсене.

КРУСТПИЛС хулинчен хĕвеланăçнерехре (Хĕвелан Двина çинче) пирĕн çарсем çапла наступлени туса пынă, тăшмана çапăçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — РОЖИ, РАЦЕНИ, ВАРЕНБРОКАС, БЛИНТИ, ГРАВЕНДЭРИ, ВАРТУНИ ятлă пысăк ялсем тата СУНАКСТЭ, СВИЛИ ятлă чугун çул станцийĕсене.

БЕЛОСТОК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ЯГЛОВО, ЗАБЕЛЕ, БЖОЗОВО, МИКИЦИН, ВРОЦЕНЬ, ШЛЯХТА, ЛУПИХИ, ДУДКИ, БОГУШОВО, ТЫКОЦИН, ЛИПНИКИ, ЦЕШИМЫ, ЧАЯКИ ятлă пысăк халăх тата КНЫШИН ятлă чугун çул станцийĕ.

СЕДЛЕЦ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла кайнă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—КОССАКИ, ЛОМНА, ТЕЛЯКИ, ГЖИМАЛЫ, КОССУВ-РУСКИ, ВРОТНУВ, МЕДЗНА, ТУХОВЕЦ, СТАРАВЕСЬ, КОРЫТНИЦА, ГНЕВНИК, ДОБРЕ РАКОВЕЦ, РУДЗЕНКО ятлă пысăк халăх тата КОССУВ-РУСКИ ятлă чугун çул станцийĕ.

САНДОМИР хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă, ВИСЛА шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 50 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Псков хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çĕнĕрен наступлени пуçласа янă. Ирхине артиллери хăватлăн хатĕрлесе панă хыççăн совет пехоти атака пуçласа янă. Укрепленисенче ларакан нимĕçсем хытă хирĕç тăнă. Пирĕн боецсем тăшман тăракан вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă та нимĕçсене дзотсемпе траншейăсенчен çапа-çапа кăларнă. Вăйлăрах та вăйлăрах пыра-пыра çапса, совет çарĕсем тăшман оборонине татнă та 25 километр таран малалла кайнă. Пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсен 30-мĕш пехотнăй дивизийĕн аркатса тăкнă чаçĕсене хыçранах хăваласа пырса, нимĕçсен тĕреклетнĕ паха пунктне Петсери (Печеры) хулине туртса илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, 1.500 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, 16 тупă, 15 миномет, 30 пулемет пĕтерсе тăкнă. 8 танк, 59 тупă, 14 миномет, 42 пулемет, 4 радиостанци тата çар пурлăхĕн темиçе пысăк складне тытса илнĕ. 300 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Крустпилс хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, наступление вăйлатса пырса, нимĕçсене халăх пурăнакан чылай пунктсенчен хăваласа кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 виллине çити выртса юлнă. Тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тата унăн йышлăн туса тултарнă инженерипе мина чăрмавĕсене çĕнтере-çĕнтере, совет пехоти 10 километр малалла кайнă, Виесите шывĕ урлă каçнă. Тăшман совет чаçĕсен наступленине чарма хăтланнă, анчах та пирĕн çарсем татăклăн çапăçса, тăшман шухăшне сирсе янă. Пĕр участокра нимĕçсен икĕ батальонĕ контратака тунă. Вăрманти çапăçура нимĕçсен çав икĕ батальонне аркатса тăкнă. Чĕррĕн тăрса юлнă гитлеровецсем вăрманта тарса сапаланса пĕтнĕ.

* * *

Белосток хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем хаяр çапăçусем хыççăн чылай тĕлте Бжозувка шывĕ урлă каçнă. Çак шывăн хĕвеланăç хĕрринче тăшман лайăхлатнă оборона позицийĕсем туса тултарнă. Совет пехоти, артиллери пулăшнипе, нимĕçсен оборонине татнă та 15 километр малалла кайнă. Тепĕр участокра нимĕçсем контратака пуçласа янă. Совет артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем çак нимĕçсене аça-çиçĕм пек пеме тытăннă. Гитлеровецсем ним йĕркипаллисĕр каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 700 вилли выртса юлнă, персе çĕмĕрнĕ 8 тупăпа 12 миномет тăрса юлнă.

Совет бомбардировщикĕсемпе штурмовикĕсем Хĕвелтухăç Пруссири Ликк тата Прошткен чугун çул станцийĕсене ăнăçлăн тапăннă. Ликк станцийĕнче чугун çул эшелонĕпе бензохранилищĕне çунтарса янă. Прошткен станцийĕнче 5 тĕлте вăйлă пушар тухнă. Вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Седлец хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Модэна, Вротнув тата Коссув-Руски районĕнче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Совет боецĕсем тăшман хирĕç тăнине сирсе янă та нимĕçсен çак хирĕç тăмалли узелне туртса илнĕ. Боеприпассен пысăк складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем ирхине тăшмана сасартăк пырса çапнă та лайăх позицисем туртса илнĕ. Çак çапăçусенче эсэсовецсен «Викинг» тата «Вилĕ пуç» ятлă дивизийĕсен подразделенийĕсене йывăр çухату кӳнĕ. Совет боецĕсем 3 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 2 тупă, танксене пемелли 14 тупă тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Сандомир хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман контратакисене сире-сире янă, Висла шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатасшăн çине тăрсах çапăçнă. Пĕр участокра тăшманăн 50 танкĕпе пехоти контратака пуçласа янă. Совет артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем тĕл персе нимĕçсен 14 танкĕпе 11 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн ирĕксĕрех каялла чакма лекнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем тепĕр участокра кун каçиччен тăшманăн çичĕ контратакине сирсе янă.

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем нимĕç çарĕсен вăтаçĕрти группин командуюийĕн Модель генерал-фельдмаршалăн приказне ярса илнĕ. Ку приказа вăл 1944 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнче панă. Приказра çапла каланă: «Салтаксем! Тăшман Хĕвелтухăç Пруссичиккисен умĕнче тăрать... Хальхи вăхăт мĕн пĕлтернине кашни тĕплĕн ăнланса илмелле. Танксенчен хăрани, çавăрса илесрен хăрани, вĕçĕмсĕр каялла чакни тата çавăн пекки ыттисем те—начар çынсен шухăшĕсем, вĕсем хăраса, чĕтресе тăнинчен килеççĕ, ун пекки нимĕç салтакĕн чĕринче пулмалла мар. Хамăр мĕнле пултаруллă çапăçнисене аса илер-ха... Кам уйрать, ун валли пирĕн ретре вырăн çук. Кам иккĕленсе тăрать—вăл пĕтнĕ çын»...

Çак приказ нимĕç генералĕсем вăрçă пуçланнă вăхăтра панă приказсенчен нумай уйрăм тăрать. Тĕрĕссипе каласан, генерал-фельдмаршал Модель кунта приказ та памасть, вăл ухмаха ернĕ çын пек, хăйĕн усал сассипе кăшкăрать кăна. Вăл хăйĕн салтакĕсене пĕрре ӳкĕтлет, тепре хăратать. Модель хăйĕн салтакĕсене вăрçă пуçланнă чухне пулса иртнĕ çĕнтерӳсене аса илсе çĕнĕ вăй тупма чĕнет. Ыттисем мĕнле, анчах та Модель генерал лайăхах пĕлсе тăрать ĕнтĕ: нимĕçсен малтанхи çĕнтерĕвĕсенче пулнă салтаксене ĕнтĕ тахçанах пурне те тенĕ пекех совет çĕршывĕнче вĕлерсе пĕтернĕ. Чĕррĕн тăрса юлнисем Польшăра тата Францире çапăçнă кунсене аса илсе савăнма пултарĕççĕ ши? Ку асаилӳсем тĕксĕмленсе кайнă ĕнтĕ. Вĕсем вырăнне нимĕçсене Мускав патĕнче аркатса тăкни çинчен, Сталинград патĕнчи катастрофа çинчен, Украинăран хăваласа кăларни çинчен, центральнăй фронт арканса кайни çинчен, нимĕç çарĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче пысăк е пĕчĕк «хурансемпе» «михĕсене» кĕрсе ӳкни çинчен калакан шухăшсем пусмăрлаççĕ нимĕç салтакĕсене. Çак поражениссем нимĕç салтакĕсен пуçĕнчен тухма пĕлмеççĕ. Çавăнпа ним иккĕленмелли те çук ĕнтĕ: танксенчен хăрани, çавăрса илесрен хăрани халĕ нимĕçсен яланхи чирĕ пулса тăраççĕ. Хăраса иккĕленсе тăракан нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен хисепĕ Германи çарĕнче кунран кунах ӳссе пырать, ăна Модель фельдмаршал нимĕнле ӳкĕтлени те, унăн нимĕнле приказĕсем те пĕтерсе лартаймĕç.

Çĕнĕ аслă шкулсем

Вăрçă пуçланнăранпа пирĕн çĕршывра пĕтĕмпе 52 аслă шкул уçăлнă. Аслă шкулсене чылайĕшне çĕршывăн хĕвелтухăçĕнчи районĕсенче уçнă, мĕншĕн тесен çав районсенче, промышленность хăвăрт ӳссе пынипе, çамрăк специалистсем ытларах кирлĕ пулса тăнă. Çапла, акă, Ташкентра строительство материалĕсен институчĕ уçăлнă. Челябинскра — машинăсем тăвас ĕçе вĕрентекен институт, Пензăпа Нижний Тагилра—индустри институчĕсем уçăлнă.

Ялхуçалăх специалисчĕсем ытла та кирлĕ районсенче: Алтайра, Ярославльте, Курганра, Урюпинра тата ыттисенче те ялхуçалăха вĕрентекен çĕнĕ аслă шкулсем уçăлнă.

Куйбышевра, Красноярскра, Челябинскра, Кисловодскра çĕнĕ медицина институчĕсем, Владивостокра, Барнаулта тата ытти хуласенче — педагогика институчĕсем уçăлнă, (ТАСС),

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хусан чугун çулĕ çинчи уйрăмах палăрнă работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламĕшĕ «Чăваш Коммуни» 157-мĕшпе 158-мĕш номерĕсенче).

87. Иван Тимофеевич Сосина — чугун çулăн 4-мĕш дистанцийĕн 5-мĕш околоткĕнчи тимĕрçе.

88. Константин Николаевич Степанова— чугун çулăн 14-мĕш дистанцийĕнчи çул мастерне.

89. Иван Семенович Театрова — чугун çул службин 5-мĕш дистанцийĕнчи çул обходчикне.

90. Петр Тихонович Тихонова — чугун çулăн 14-мĕш дистанцийĕнчи çул обходчикне.

91. Юрий Иванович Толмозăва — Канаш станцийĕнчи депон токарьне.

92. Алексей Григорьевич Удачина — движени службин 2-мĕш отделенийĕн начальникне.

93. Григорий Федорович Федорова — Канаш станцийĕнчи депон тимĕрçине.

94. Дмитрий Федорович Федорова — чугун çулăн 14-мĕш дистанцийĕн юсвкан старши рабочине.

95. Николай Федорович Федорова — Йĕпреç станцийĕн старши стрелочникне.

96. Вера Ивановна Федоровăна — Çĕмĕрле станцийĕнчи топливо склачĕн работницине.

97. Надежда Степановна Хумаровăна — Çĕмĕрле станцийĕнчи топливо склачĕн работницине.

98. Аргил Иосифович Чихрадзене — Канаш станцийĕнчи депо начальникĕн заместительне.

99. Семен Герасимович Шемякова.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕн вăрман хатĕрлекен организацийĕсен уйрăмах палăрнă рабочийĕсене, инженерĕсемпе техникĕсене тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес, турттарса кăларас тата парса тăрас ĕçре производство заданийĕсене ăнăçлă пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕшĕн Чăваш АССР-ĕн вăрман хатĕрлекен организацийĕсен уйрăмах палăрнă çак рабочийĕсене, инженерĕсемпе техникĕсене тата ертсе пыракан работникĕсене, железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри Сталинла Кунне палăртас майпа, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Александра Алексеевна Алексеевăна — Канаш леспромхозĕн Шăхранти вăрман пункчĕн вăрман касаканне.

2. Степан Алексеевич Алексеева — партин Вăрнар лесхозĕнчи пуçламĕш организацийĕн секретарьне.

3. Сергей Андреевич Андреева — Вăрнар леспромхозĕн приемщик-мастерне.

4. Федот Иванович Афанасьева — Пăва леспромхозĕн вăрман хатĕрлев мастерне.

5. Тихон Тимофеевич Бартасова — Йĕпреç лесхозĕн лучковăй пăчкăпа вăрман касаканне.

6. Никита Митрофанович Бельские — ВКП(б) Обкомĕн Йĕпреç леспромхозĕ çумĕнчи парторгне.

7. Василий Иванович Беляева — ВКП(б) Обкомĕн Çĕмĕрле мехлесопункчĕ çумĕнчи парторгне.

8. Марфа Васильевна Васильевăна — Главснаблесăн Енĕшпуçĕнчи вăрман складĕнчи грузчиксен бригадирне.

9. Устиния Васильевна Васильевăна — Хĕрлĕ Чутай мехлесопункчĕн лучковăй пăчкăпа вăрман касаканне.

10. Михаил Павлович Воронина — Хĕрлĕ Чутай мехлесопункчĕн Кăмашари вăрман турттармалли çулĕн механически мастерскойĕнче ĕçлекен монтажника.

11. Александр Григорьевич Григорьева— Вăрнар лесхозĕн директорне.

12. Александр Никандрович Давыдова— Çĕмĕрле мехлесопункчĕн вăрман касаканне.

13. Анна Даниловна Даниловăна — Йĕпреç леспромхозĕн вăрман касаканне.

14. Анисия Дмитриевна Дмитриевăна — Йĕпреç леспромхозĕн лавçине.

15. Иван Тимофеевич Дмитриева—Хĕрлĕ Чутай мехлесопункчĕн Кăмашари вăрман турттармалли çулĕ çинче ĕçлекен тракториста.

16. Сергей Федорович Егорова — Улатăр леспромхозĕн лавçине.

17. Степан Иванович Ермишина — Çĕмĕрле мехлесопункчĕн вăрман касаканне.

18. Яков Константинович Ермошина — Çĕмĕрле мехлесопункчĕн вăрман касаканне.

19. Анастасия Ефимовна Ефимовăна — Йĕпреç лесхозĕн лавçине.

20. Варвара Ивановна Ивановăна — Йĕпреç леспромхозĕн лавçине.

21. Ольга Степановна Ижденевăна — вăрман касакана, Йĕпреç районĕнчи «Коминтерн» колхозăн колхозницине.

22. Анна Ивановна Ильдугановăна — Вăрнар леспромхозĕн вăрман касакансен бригадирне.

23. Анастасия Игнатьевна Ильдугановăна — Вăрнар леспромхозĕн вăрман касаканне.

24. Афанасий Сергеевич Ильина — Кире лесхозĕн лавçине.

25. Михаил Степанович Клячкина — Çĕмĕрле мехлесопункчĕн начальникне.

26. Алексей Степанович Кондратьева — Хĕрлĕ Чутай мехлесопункчĕн Кăмашари вутă турттармалли çулĕ çинче ĕçлекен механика.

27. Василий Васильевич Крынецкие — Хĕрлĕ Чутай мехлесопункчĕн лучковăй пăчкăпа вăрман касаканне.

28. Петр Алексеевич Ларионова — Чăвашсен вăрман сыхлав управленийĕн главнăй лесничине.

28. Григорий Матвеевич Матвеева — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ультикасси ялсоветĕн председательне.

30. Иван Дмитриевич Меркулова — Çĕмĕрле мехлесопункчĕн тракторпа турттармалли Сăр çулĕн механически мастерскойĕнче ĕçлекен токаре.

31. Перасковия Михайловна Металловăна — Хĕрлĕ Чутай мехлесопункчĕн вăрман касаканне.

32. Николай Михайлович Михайлова — Вăрнар лесхозĕн лучковăй пăчкăпа вăрман касаканне.

33. Матрена Михайловна Михайловăна— Кире лесхозĕн вăрман касаканне.

34. Алексей Васильевич Морскова — «Красная Чувашия» хаçат редакцийĕн промышленноçпа транспорт отделĕн заведующине.

35. Леонтий Герасимович Моторина — ВКП(б) Обкомĕн Улатăр леспромхозĕ çумĕнчи парторгне.

36. Андриан Назарович Назарова — Вăрнар лесхозĕн лучковăй пăчкăпа вăрман касаканне.

37. Екатерина Михайловна Назаровăна— Канаш леспромхозĕн Шăхранти вăрман пункчĕн лавçине.

38. Георгий Николаевич Непримерова — Йĕпреç леспромхозĕн технически директорĕ пулнăскерне, халĕ Вăрнар леспромхозĕн директорне.

39. Зиновий Афанасьевич Никифоряка— Çĕмĕрле мехлесопункчĕн вăрман касаканне.

40. Яков Константинович Осипова — Вăрнар леспромхозĕн вăрман хатĕрлев мастерне.

41. Григорий Игнатьевич Павловские— Çĕмĕрлери вăрман пункчĕн начальникне.

42. Павел Васильевич Платонова — Канаш леспромхозĕн напильник шăллакан мастерне.

43. Евгений Прокопьевич Прокопьева — Вăрнар леспромхозĕн лучковăй пăчкăпа вăрман касаканне.

44. Иустиния Романовна Романовăна — Вăрнар лесхозĕн пăчкă шăллаканне.

45. Мария Романовна Романовăна — Йĕпреç леспромхозĕн вăрман касаканне.

46. Кирилл Николаевич Руссина — Главснаблесăн Енĕшпуçĕнчи тата Кипечри складсен заведующине.

47. Александра Федоровна Рыжковăна— Канаш леспромхозĕн Шăхранти вăрман пункчĕн лавçине.

48. Николай Дмитриевич Саушина — Çĕмĕрле мехлесопункчĕн вăрман касаканне.

49. Илья Федорович Сафронова — Вăрнар леспромхозĕн вăрман хатĕрлев мастерне.

50. Николай Григорьевич Смирнова — Вăрнар леспромхозĕн лучковăй пăчкăпа вăрман касаканне.

51. Константин Георгиевич Соснина — Сĕнтĕрвăрри райсовет Исполкомĕн председателĕн заместительне.

52. Андрей Титович Титова — Канаш леспромхозĕн Шăхранти вăрман пункчĕн вăрман касаканне.

53. Иван Васильевич Токсубаева—Хĕрлĕ Чутай мехлесопункчĕн лучковăй пăчкăпа вăрман касаканне.

54. Елизавета Филипповна Филипповăна — Канаш леспромхозĕн Шăхранти вăрман пункчĕн вăрман касаканне.

55. Яков Дмитриевич Чиркова — Çĕмĕрле мехлесопункчĕн вăрман касаканне.

56. Иван Петрович Шамбрука — Çĕмĕрле мехлесопункчĕн вăрман касаканне.

57. Мария Кононовна Юртаевăна — Главснаблесăн Чарăклăри вăрман склачĕн грузчикне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи августăн 11-мĕшĕ.

Заводри Хĕрлĕ ялав Гольдман юлташ цехĕнче

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод июль уйăхĕнчи плана 105 процент тултарнă. Нумаях пулмасть заводра цех коллективĕсен социализмлă ăмăртăвĕн июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Гольдман юлташ начальник пулса ĕçлекен цех малти вырăна тухнине палăртнă. Вăл уйăхри плана 122 процент тултарнă. Çав цеха заводри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава памалла тунă.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Ленинградри укçа заводĕнче

Ленинградри укçа заводĕнче (монетнăй дворта), 220 çул каялла 1-мĕш Петр тунăскерте, «Кавказа хӳтĕленĕшĕн» ятлă медаль тума пуçланă. Граверсем халь çав медале питĕ тăрăшса хатĕрлеççĕ. Август уйăхĕнче Совет Кавказне хӳтĕленĕ геройсене наградăламашкăн 125 пин медаль туса кăлараççĕ.

Укçа завочĕ вăрçă пуçланнăранпа пĕрремĕш хут 10, 15 тата 20 пуслăх кĕмĕл укçасем туса кăларма пуçланă. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕМ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КЕРТМЕЛЛИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тырăсем вырнă	Капана хывнă	Çапнă	Пуса татнă
Чурачăк	43,1	11,3	4,7	98,1
Чкаловски	41,8	20,8	15,7	—
Шăхасан	40,7	7,3	5,5	54,7
Калинино	40,6	7,2	2,7	69,3
Елчĕк	40,4	7,0	4,8	—
Çĕрпӳ	38,5	8,6	5,6	74,4
Комсомольски	38,2	7,0	4,8	19,5
Красноармейски	37,0	9,4	7,6	—
Вăрмар	36,6	9,3	6,1	6,5
Вăрнар	35,7	14,1	8,2	94,1
Муркаш	35,3	14,5	5,0	—
Октябрьски	34,6	7,0	4,9	—
Советски	34,0	3,2	1,3	17,2
Куславкка	33,0	12,8	5,8	—
Канаш	32,9	11,8	6,4	37,5
Тăвай	32,2	6,0	4,8	16,5
Сĕнтĕр	31,4	16,9	6,1	100,0
Шупашкар	30,8	15,1	9,7	52,5
Элĕк	30,3	2,4	1,3	100,0
Ишлей	29,7	8,4	5,1	—
Етĕрне	29,4	7,4	4,9	29,8
Пăрачкав	29,1	5,4	—	—
Сĕнтĕрвăрри	28,6	6,4	4,1	47,9
Хĕрлĕ Чутай	27,8	9,5	7,0	32,0
Çĕмĕрле	25,6	17,0	7,4	100,0
Йĕпреç	24,8	11,5	10,4	—
Шăмăршă	22,3	1,8	2,2	—
Первомайски	22,2	9,5	6,5	6,6
Улатăр	18,2	5,5	3,1	—
Кувакино	15,1	16,1	6,4	—
Шупашкар хули	16,0	—	—	—
Пĕтĕмпе	33,1	9,6	5,6	35,9
Августăн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	21,8	9,0	—	—

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕМ СИЛОС ХЫВМАЛЛИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Силос хывнă
Чурачăк	121,1
Шăхасан	118,6
Комсомольски	118,5
Кувакино	108,8
Сĕнтĕрвăрри	105,0
Çĕмĕрле	102,9
Çĕрпӳ	102,7
Шупашкар	101,7
Вăрмар	100,5
Красноармейски	100,3
Элĕк	99,5
Чкаловски	97,4
Сĕнтĕр	95,1
Вăрнар	88,9
Улатăр	88,3
Муркаш	86,6
Калинино	85,0
Елчĕк	83,2
Канаш	83,2
Куславкка	79,0
Етĕрне	78,5
Первомайски	78,2
Шăмăршă	76,4
Йĕпреç	75,4
Октябрьски	73,4
Тăвай	73,2
Советски	72,6
Пăрачкав	72,6
Хĕрлĕ Чутай	56,9
Ишлей	53,8

Чурачăк тата Чкаловски районсенчи колхозсем ыраш вырса пĕтерне

Чурачăкпа Чкаловски районсенчи колхозсем ыраш вырса пĕтернĕ. Халĕ унти колхозсем вырнă тырра капана хываççĕ, çуртыррисене массăллăн вырма тытăннă, кĕрхи тырăсем акаççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре юлашки кунсенче Вăрмар, Шăхасан, Çĕрпӳ районĕсем ăнăçлă ĕçлеме тытăнчĕç. Вăрмар районĕ августăн 12-мĕшĕнче, пĕр кунта, 1418 гектар вырнă. Вăрмар, Калинино, Елчĕк тата Пăрачкав районĕсем кĕрхи тырăсене паян-ыранах вырса пĕтереççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре çаплипех Кувакино, Улатăр, Первомайски тата Шăмăршă районĕсем юлса пыраççĕ.

Çуртыррисем вырма тытăннă

МУРКАШ, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). «Зерно» колхозра (председателĕ П. Васильев юлташ) ăнса пулнă тырпула организованно выраççĕ. Вăрнарсем чĕнсе каланине сӳтсе-явнă хыççăн кунта социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. П. Кудрявцева колхозница, 5 кун хушши тăтăшах çавапа çулса, нормăна иккĕçĕ хут ирттерсе тултарать. Ыраш вырма тухнăранпа вăл 77,2 ĕçкунĕ тунă. М. Семенова, А. Осипова, М. Осипова колхозницăсем те кулленхи нормăна 200—250 процент тултарса пыраççĕ.

Колхоз августăн 9-мĕшĕнче ыраш вырса пĕтерчĕ, халĕ çуртыррисем вырма тытăнчĕç.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Шупашкарти хатĕрлев пункчĕ тырă йышăнма япăх хатĕрленнĕ

Республикăри чылай колхозсем тăван çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе — государствăна тырă парассине пурнăçлама тытăнчĕç. Августăн 12-мĕшĕ тĕлне Ишлей районĕнчи колхозсем Шупашкар хатĕрлев пунктне 36 тонна тырă леçнĕ. Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш районĕсенчен те тырă лавĕсем нумайшарăн килеççĕ. Вăтамран илсен, кунсерен 100—200 лавран кая килмест. Августăн 1-мĕшĕпе 11-мĕшĕ хушшинче Шупашкарти хатĕрлев пунктне çĕршер тонна тырă килнĕ.

Халĕ кусем пуçламĕш лавсем çеç-ха. Малашне тырă татах та ытларах йышăнмалла пулать. Хатĕрлев пункчĕсемшĕн ку чи ответлă тапхăр. Çавăнпа та вĕсен çак кунсенче нихăçанхинчен те тимлĕрех ĕçлени кирлĕ.

Тӳрех калас пулать, Шупашкарти хатĕрлев пункчĕ тырă йышăнма япăх хатĕрленнĕ. Хатĕрлев пунктĕнчи 10 складран 5-ĕшне çеç юсанă. Склад патне пымалли çула юсаса якатман. Çăмăр çусан лашасем тăратмалли вырăнсем те çук. Тырă паракансем валли чайнăй организацилемен, хĕрлĕ кĕтес те туман. Хатĕрлев пункчĕн пуçлăхĕнчен Тимофеев юлташран çак ĕçсем çинчен ыйтса пĕлме тăрăшсан, вăл «условисем туса парасси манăн ĕç мар, эпĕ тырă кăна йышăнатăп», тесе мăнкăмăллăн ответлет.

ВКП(б) хула комитечĕпе хула совет исполкомĕ тата суту-илӳ организацийĕсем те хатĕрлев пункчĕн ĕçĕсемпе пачах интересленмеççĕ. Хатĕрлев пунктĕнче хĕрлĕ кĕтессем тăвасси, ăна радио, хаçат-журналсем, плакатсем тупса парасси, унта пропагандист пулса ĕçлеме çын уйăрасси, чайнăйсем организацилесси пĕтĕмпех вĕсен тивĕçлĕхĕ.

Хатĕрлев пункчĕсенчи çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерсе, тырăпа килекен колхозниксене тивĕçлĕ условисем туса памалла.

З. МИТРОФАНОВА.

Район 5.500 тонна силос хывнă

ЕЛЧĔК, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Тырă вырас ĕçе организованно тытăнни тата уйрăм сдельщинăпа анлăн усă курни ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерчĕ. Паянхи кун тĕлне 43 колхоз ыраш вырса пĕтернĕ, пурĕ 13043 гектар тырă вырнă, вăл шутра çуртыррисене 1172 гектар вырнă. 924 гектар çинчи кĕлтене капана хывнă, 638 гектар çинчи тырра çапнă. Чи лайăх тĕшт тырра вăрлăхлăх уйăраççĕ тата государствăна обязательство тăрăх параççĕ. Августăн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна 729 центнер тырă панă.

Тырпул вырса пухассипе пĕрлех районри колхозсем силос хывас ĕçе те ăнăçлă туса пыраççĕ. Паянхи кун тĕлне районĕпе 5500 тонна силос хывнă.

Кĕрхи тырăсем акаççĕ

ТĂВАЙ, августăн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Ыраша иртерех акса хăварсан кăна пысăк тухăçлă тырпул туса илме пулать. Çакна шута илсе, районри чылай колхозсем ыраш акас уменхи ĕçсене—иккĕмĕш хут çĕртме тăвассине, çĕртме пуссине тислĕк тăкассине вăхăтра туса ирттерчĕç. Паянхи кун тĕлне районри 21 колхоз хĕрсех ыраш акаççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 40 гектар акнă. Кунта 4 сеялка ĕçлет. «Красная Чувашия» колхоз 32 гектар акнă. Паян кунта 6 сеялкăпа акаççĕ. Паянхи кун тĕлне районĕпе 220 гектар акнă. Паян пур колхозсем те ыраш акма тытăнаççĕ.

С. МИХАЙЛОВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

* * *

ВĂРМАР, августăн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те ыраш акма тытăнчĕç. Кăçал пирĕн колхозсем, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ыраш акас ĕçе кал-каллăнрах пуçăнчĕç. Акас умĕнхи ĕçсене пĕтĕмпех лайăх тунă, ыраш акмалли уйсенче çумкурăксем çук. Паянхи кун тĕлне колхозсен уйхирĕсенче 129 сеялка ĕçлет, колхозсенчен малтанлăха пĕлтернĕ тăрăх, 700 гектар ытла акнă. Уйрăмăнах ыраш акас ĕç «Красная Кубня» колхозра ăнăçлă пырать, кунта 75 гектар ытла пĕтĕмпех сеялкăсемпе акнă. Молотов ячĕпе тăракан колхоз 28 гектар, «Анис» колхоз 40 гектар акнă.

Анчах та çакăнпа пĕрлех ыраш акас ĕçе хатĕрленмесĕр тухнă колхозсем те пур-ха. «Чувашский крестьянин» колхоз (председателĕ Малафеев юлташ) ыраш акма пуçăнманпа пĕрех, çак колхозăн çĕртме пуссине çумкурăк пусса илнĕ. Калас пулать, «Чувашский крестьянин» колхоз тырпулсене пухса кĕртес ĕçре те çаврăнăçусăр ĕçлет. Кунта паян куна та вырмалли ыраш 97 гектар ытла шутланать. Колхозра уйрăм сдельщинăпа ĕçлемеççĕ, Малафеев юлташ хăй хире тухса та курмасть.

И. САПАРКИН,
Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Ĕçе кал-кал тăватăн—чыса çÿлте тытатăн

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ ялавлă колхоз вăрçă вăхăтĕнчи хастар ĕçĕн тĕслĕхне кăтартса парать

Укерчĕк çинче: Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри 4-мĕш бригадăн бригадирĕ П. Л. Леонтьев юлташ. Бригадирта 7 çул ĕçлет.

Хĕрлĕ ялав пирĕн алăрах пулĕ

Тырпул пухса кĕртесси кĕске вăхăтра пулса иртекен ĕç, ăна вăхăтра тата паха туса ирттерни пĕтĕм ялхуçалăх çулĕн ăнăçлăхне татса парать. Тырă вырма тухсан малтанхи кунĕсенченех эпир ăмăртса ĕçлеме тытăнтăмăр. Манăн бригадăра 4 звено, ĕçлеме пултаракансем — 50 çынна яхăн. Звенопа звено хушшинче хĕрÿллĕ [illegible]

[illegible] ри Е. Леонтьева колхозница суратсемпе çĕмелсене шыв каймалла мар тăвать. Ватă хĕрарăм София Михайловская ĕç нормине 170—200 процент тултарса ĕçлет. А. Кудрявцева, М. Леонтьева юлташсем те нормăна нумай ирттерсе тултараççĕ, ĕçĕ те вĕсен тирпейлĕ.

Пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа, звеносенчи пĕчĕк ушкăнсемпе туса пынине пула пирĕн ĕç тухăçлăхĕ пысăк, нахалăхĕ аван. Манăн бригада пур енчен те мала тухрĕ, çапла вара колхоз правленийĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çак хисеплĕ ялава хамăр бригадăрах хăварассишĕн, анса пулнă тырра пĕтĕмпех ăнăçлă пухса кĕртессишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр, лĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр.

П. ЛЕОНТЬЕВ.
Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри 4-мĕш бригадăн бригадирĕ.

Колхозри строительство

Отечественнăй аслă вăрçă пынă йывăр вăхăтра та Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра çуртйĕрсем тăвасси чарăнса тăмасть.

Çак юлашки çулсенче кăна колхоз 100 пуç вырнаçмалăх сысна вити, 45 пуç вырнаçмалăх лаша вити, 80 пуç вырнаçмалăх пăру вити, 100 пуç вырнаçмалăх сурăх пÿтеккисене хупмалли вите туса лартнă. Унсăр пуçне 3 овощехранилище, пекарня тунă. Халĕ колхоз правленийĕпе клуб валли çурт туса пĕтереççĕ, унăн тăршшĕ 22 метр, сарлакăшĕ 10 метр.

Колхоз 22 лаша вăйлĕ двигатель туяннă тата тырăсем хума зернохранилище тунă.

Вăрçă çулĕсенче колхоз членĕсем хăйсем валли çĕнĕрен 10 пÿрт лартнă.

Тырпул фронтĕнчи çĕнтерÿшĕн

Анса пулнă тырă кĕтме юратмасть, часах тăкăнма та пăхать. Çавăнпа та тырпул пухса кĕртме вăхăтра, тĕплĕн шутласа ĕç планĕ туни, çав плана пурнăçлас ĕçре тĕрлĕ чăрмавсене пĕтермелли майсене палăртса хуни калама çук пысăк вырăн йышăнать. Эпир ĕç планĕ тунă çĕре колхозри мĕнпур актива явăçтартăмăр; колхозниксемпе колхозницăсем кашниех хăш ĕçе мĕнле тата хăçан тумаллине малтанах пĕлчĕç. Уборкăна хатĕрленнĕ çĕре хăйсем хастарлăн хутшăнса ĕçлерĕç.

Тырă вырма эпир пур енчен те лайăх хатĕрленсе тухнă. Машинăсене вăхăтра юсанă. Вĕсем вара пирĕн сахалах мар: 7 жнейка, 7 сеялка, «ПДО-34» тата 6 лашапа ĕçлемелли «Р-25» маркăллă молотилкăсем, 22 лаша вăйлĕ двигатель тата ытти машинăсем. Вĕсене пурне те тĕплĕн юсанă. Машинăсене юсас ĕçе тимĕрçĕсемпе пĕрле яланах машиноведсем хутшăнса ĕçленĕ, çапла вара вĕсем кашни машинăн хăш пайĕ хăвăртрах пĕтме е пăсăлма пултарассине, çав пая ытларах ĕçлеттермелле тăвас тесен мĕн тумаллине лайăх вĕренсе çитнĕ.

Вырса пухмалли тырăсем пирĕн пурĕ 669 гектар. 240 гектар ыраша эпир 6 кун хушшинче пухса кĕртрĕмĕр. Ĕçре пĕтĕмпех уйрăм сдельщинăпа ĕçлетпĕр. Колхозра 6 бригада, кашни бригадăрах 4 звено, звенора вара 10—12 çын тăрать. Тырă вырнă çĕрте звено членĕсем 3—4 çынран тăракан ушкăнсене уйăрălса ĕçлеççĕ. Кашни ĕçех туса пĕтернĕ хыççăн пахалăх комиссийĕ йышăнать. Пирĕн колхозра, пĕтĕмĕшпе илсен, ĕç пахалăхĕ лайăх, анчах та, ытти бригадăсемпе танлаштарсан, С. Портнов юлташ ертсе пыракан 6-мĕш бригадăн [illegible]

[illegible] ĕçĕн тухăçлăхĕ те ÿсрĕ. Ыраш вырма тухсан виççĕмĕш кунĕнчех нормăна ытлашшипех тултарса пынăшăн 16 çынна колхозри Хисеп хăми çине кĕртрĕмĕр, тепĕр 3 кунран стахановецсен хисепĕ икĕ хут ытла ÿсрĕ. Хисеп хăми çине тата 32 çын кĕме тивĕçлĕ пулчĕç. Машинăпа тырă выракан П. Алексеев кулленех нормăна 150—180 процент тултарса ĕçлерĕ. Машинăпа вырнă тырра сыхас ĕçре уйрăмăнах Матрена Леонтьева чапа тухрĕ, вăл 400 кĕлте вырăнне 1.300 кĕлтене çити сыхать.

Пирĕн колхозăн 171 гектар тулă пур, ăна эпир паян-ыран вырса пĕтеретпĕр, пĕр 30 гектар ешĕл пирки кăшт тăхтама тивет. 173 гектар сĕлĕ çитĕнет, ăна та августăн 15-мĕшĕччен вырса пĕтеретпĕр.

Ыраш кĕлтине турттарса капана хывасси çак кунсенче пĕтет. 10 гектар çинчи ыраша çапса пăхрăмăр, вăтам шутпа гектартан 20 центнертан кая тухмасть.

Кăçал пирĕн 330 гектар ыраш акмалла, çĕртме пуссине иккĕмĕш хут сухаларăмăр. Ыраш акас ĕç пуçланчĕ. Ку ĕçре 24 плугпа тата 7 сеялкăпа ĕçлетпĕр. Ыраша иртерех акни усăллине эпир лайăх пĕлетпĕр, çавăнпа та кăçал августăн 20-мĕш тĕлне акса пĕтерме шутлатпăр.

Халĕ авăн çапма тытăнтăмăр. Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ С. Емельянов юлташ молотилкăсене лайăх хатĕрлерĕ. Вăл хăех машинист пулса ĕçлет.

Тырпула сыхласси пысăк та ответлă ĕç. Эпир уйри тырăсене кăнтăрла та, çĕрле те куç шăрçине сыхланă пек сыхлатпăр.

Государствăна обязательствăсем тăрăх тырă эпир 1944 çулшăн иртнĕ çулах [illegible]

В. ЗАЙЦЕВ,
Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Колхозсенче шанчăклă хурал пур

[illegible] сенчи çимĕçсене сыхласси, колхозниксен пурлăхĕсене хуралласси—пĕчĕк ĕç мар. Ялта шанчăклă хурал пулсан кăна колхозник пĕр шикленмесĕр ĕçлеме пултарать. Çакна шута илсе эпир кашни колхозрах хуралçăсене чи шанчăклă çынсенчен уйăртăмăр.

Пирĕн ялсоветне «МОПР» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем кĕреççĕ. [illegible]

А. ОВЧИННИКОВ,
Аслă Пăла Тимеш ялсоветĕн председателĕ.

Укерчĕк çинче: 1. Аслă Пăла Тимеш ялсоветĕн председателĕ А. Н. Овчинников юлташ. Вăл ертсе пыракан ялсоветĕнчи «МОПР» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем районра малта пыраççĕ. 2. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри стахановка И. Н. Портнова юлташ. Вăл тырă вырнă çĕрте нормăна 150—200 процент тултарса пынă.

Укерчĕк çинче: Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри машинист, Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ П. Н. Алексеев юлташ. Вăл жнейкăпа кашни кунах 6—7 гектар вырать.

Машинăна юратни кирлĕ

Пирĕн колхозра 7 жнейка. Тырă вырма тухнăранпа машинăсемпе ĕçлекенсем нормăна ытлашшипех тултарса пынă. Эпĕ хам 4 гектар вырăнне 6 гектар, хăш чухне 7—8 гектар та выратăп. Июлĕн 24-мĕшĕнче тырă вырма тухрăмăр, ырашпа тулла вырса пĕтернĕ ĕнтĕ, анчах машина ĕçре пĕрре те чаранман. Унпа хуть хăçан та ĕçлеме пулать. Мĕнрен килет-ха вăл? Чăн малтанах, хăвна шанса панă машинăна лайăх пĕлес пулать, ăна юратса пăхас пулать. Эпĕ хам ĕçлекен жнайкăна юсанă чухнех тимĕрçĕпе пĕрле ĕçленĕ. Машинăн хăш пайĕ мĕнле ĕçленине, хăш пайĕ хăвăрт пĕтме пултарнине лайăх пĕлетĕп.

Машинăна кÿлнĕ лашасем пĕр пек вăйлă пулсан аван. Машинăпа вырмалли тырă çинче хытхура е ытти çавăн пек хытă туналлă çумкурăксем пулсан тата вĕсене тасатмасан, паллах, машина ванмасăр нумай чăтаймасть. Çавăнпа та хытă туналлă курăксене машинăпа вырмалли участоксенче тасатмалла.

Каçхине, ĕçлеме чарăнсан, машинăна тĕрĕслес пулать, тасатмалла, унтан çу сĕрмелле. Ĕçленĕ вăхăтра та уйрăм вырăнсене çу е маç сĕрсе тăмалла. Машинăна юратса, лайăх пăхсан, вăл пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме пултарать.

П. АЛЕКСЕЕВ,
Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри машинист.

Пирĕн ĕç—тăшман пуçĕшĕн хĕç

Отечественнăй аслă вăрçăн 4-мĕш çулĕнче иртекен ялхуçалăх çулĕнче мана питĕ ответлă ĕç пачĕç: рекордлă участокра ĕçлекен звенона ертсе пыма хушрĕç. Çак ĕçĕн ответлăхне туйса, эпир вăя шеллемесĕр ĕçлетпĕр.

Пирĕн участокра 7 гектар, звенора — 7 çын. Тырă акиччен эпир çак участок çине питĕ нумай тислĕк тăкрăмăр: тислĕк тăкман вырăн пачах та çук. Пирĕн участокра тулă шăтса тухсанах, çĕрнĕ тислĕк 150 лав сапрăмăр, унсăр пуçне 1000 витре ытла тислĕк шĕвекĕ тăкса апатлантарнă. Пирĕн участокри тырпул çинче нихăçан та çумкуракĕ пулман. Манăн звенора уйрăмăнах П. Васильева, Е. Алюнова юлташсем аван ĕçлеççĕ. Тулă лайăх çитĕнет, кашни гектартан 30 центнертан кая мар пухса илессе шансах тăратпăр. Халĕ ăна куç шăрçине сыхланă пек çĕрле те, кăнтăрла та сыхласа тăратпăр.

Çак рекордлă участокра эпир пĕтĕмпех хĕрарăмсем ĕçлетпĕр. Пирĕн упăшкасем фронтра, тискер тăшмана аркатса тăкассишĕн çапăçаççĕ. Эпир вĕсене хамăрăн ĕçпе пулăшас тетпĕр. Пирĕн хĕрÿллĕ ĕç тăшман пуçĕшĕн хĕç пултăр.

А. ЕМЕЛЬЯНОВА,
Рекордлă участокра ĕçлекен звенон звеновочĕ.

Совет Союзĕн, Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Великобританин представителĕсем хăрушсăрлăха сыхласа тăракан пĕтĕм тĕнчери организаци тăвасси пирки Вашингтона пухăнса калаçасси çинчен

Çапла пĕлтернĕччĕ: Совет Союзĕн, Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Великобританин представителĕсем мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăракан пĕтĕм тĕнчери организаци тăвассин тĕп ыйтăвĕсем пирки Вашингтонра август уйăхĕн пуçламĕшĕнче малтанлăха официальнăй мар йĕркепе калаçса илмелле тенĕччĕ. Хальхи вăхăтра килĕшнĕ тăрăх, çав калаçусем Вашингтонра августăн 21-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Вăл калаçусене хутшăнма СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ делегаци тунă. Делегацие çаксем кĕреççĕ: А. А. Громыко (Совет Союзĕн Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи посолĕ, делегаци председателĕ), А. А. Соболев, С. К. Царапкин, контр-адмирал К. К. Родионов, генерал-майор П. В. Славин, профессор С. А. Голунский, профессор С. Б. Крылов, Г. Г. Долбин, делегаци секретарĕ М. М. Юнин, секретарь-тăлмач В. М. Бережков.

СССР Наркоминделĕн Информаци бюровĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Нантпа Анжер хулисене кĕрсе кайнă. Нант хулинче тăшман хытах хирĕç тăман, анчах та вăл çав икĕ хулан районĕсене те минăсем нумай хурса хăварнă. Бретаньре союзниксен çарĕсем Эннебон, Орэ тата Киберон районĕсене тăшмантан тасатса пыраççĕ. Америка çарĕсем Лориан хулине тип çĕр енчен пĕтĕмпех çавăрса илнĕ. Тăшман Брест хулинче çаплах вăйлă хирĕç тăрать, унта Германин виçĕ дивизийĕн чаçĕсем тăраççĕ. Хула тулашĕнче пирĕн çарсем çумне çурçĕрти тинĕс хĕрринчи çулпа куçса пынă ытти чаçсем хутшăннă. Сен-Мало районĕнче тăшман пĕр çирĕплетнĕ пункта çеç хÿтĕлет, унта вара вăл питĕ хытă хирĕç тăрать. Портра халиччен 3.000 çынна тыткăна илнĕ. Сен-Мало районĕнче нимĕçсем Динара çаплах вăйлă хÿтĕлеççĕ.

Нормандире, Мортэн—Вир районĕнче, çаплах вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Тăшман Мортэн хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăрталарахра калама çук хаяррăн хирĕç тăрать. Вир хули районĕнче союзниксен çарĕсем кăнтăралла 1—1,5 миля куçнă. Союзниксен ытти чаçĕсем тăшмана Гатемо еннелле атакăлаççĕ, нимĕçсем унта хытă хирĕç тăраççĕ.

Союзниксен çарĕсем Орн шывĕ хĕрринчи укрепленисене аслăлатнă, 3—5 километра яхăн малалла кайнă, Эспен ятлă пункта тытса илнĕ. Союзниксен авиацийĕ çĕр çинчи çарсене пулăшса пынă, вăл ĕнер кунĕпех Бельгирен пуçласа Бордо патне çитиччен тăшманăн снабжени центрĕсене тата шоссе çулĕсемпе чугун çулĕсене вĕçе-вĕçе пырса тапаннă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: фронтăн Адриатика секторĕнче акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Миза шывĕпе Чезано шывĕ хушшинчи тÿремсăртлăха тăшмантан тасатнă, халăх пурăнакан Монтерадо тата Кобиналь до ятлă пунктсене туртса илнĕ. Çав районра халь тăшман хирĕç тăракан пысăк мар вырăнсем çеç тăрса юлнă, вĕсем тинĕс хĕрринчен 20 километрта, Чезано шывĕнчен кăнтăртарахра. Союзниксен çарĕсен разведка тăвакан отрячĕсем Чезано шывĕ урлă каçса кайнă ĕнтĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă улшăну та пулман.

Çанталăк начар тăнă пирки союзниксен авиацийĕ вăйлах кĕрешеймен, вăл тăшманăн Çурçĕр Италири тата Югославири çар объекчĕсене пыра-пыра тапаннă.

БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çĕр «Москито» йышши самолетсем Берлина тапаннă, 1,8-шер тонна таякан бомбăсем пăрахнă.

Августăн 10-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен «Ланкастер» йышши самолетсем (Англин сывлăш-çар вăйĕсен хисепĕнче тăракан-скерсем) самолет-снарядсен Çурçĕр Францири базисене тапаннă.

ЧЕРЧИЛЛЬ ИТАЛИРЕ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Британин премьер-министрĕ Черчилль Италие çитнĕ.

АМЕРИКАРИ РАБОЧИ ПАРТИ ХĂЙ ЕНЧЕН ПРЕЗИДЕНТ ПУЛМА РУЗВЕЛЬТА СУЙЛАМА СĔНЕТ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри рабочи партин съезчĕ çитес суйлавра США президентне Рузвельта, вице-президента Трумэна суйлама кандидата тăратнă. Çак рабочи парти хăйĕн йĕсĕсемпе пуринчен ытла Нью-Йорк штатĕнче вăйлă паларса тăрать.

АМЕРИКАН «ВĔÇЕКЕН КРЕПОСТЬ» ЙЫШШИ КАЛАМА ÇУК ВĂЙЛА САМОЛЕЧĔСЕМ КЮСЮ УТРАВĔПЕ СУМАТРА УТРАВНЕ ТАПАННА

ВАШИНГТОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтерет: августăн 10-мĕшĕнче Америка авиацийĕн Китайри 20-мĕш соединенийĕнчи «Вĕçекен крепость» йышши калама çук вăйлă самолетсем Кюсю утравĕ çинчи Нагасаки районĕнчи промышленность объекчĕсене тапаннă.

Америка авиацийĕн тепĕр соединенийĕ Суматра утравĕ çинчи Палембанг тулашĕнчи объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Суматра утравне союзниксен Кăнтăр-хĕвелтухăç Азири çарĕсен командованине пăхăнса тăракан базăсенчен вĕçсе кайса тапаннă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ПАЛХАВА ХУТШĂННА ГЕНЕРАЛСЕН АРĂМĔСЕМПЕ АЧИСЕНЕ АСАПЛАНТАРСА ВĔЛЕРЕÇÇĔ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, çакăн пек хыпарсем илнĕ: гитлеровецсем Гитлера хирĕç пуçласа янă пăлхава хутшăннă генералсемпе офицерсен арăмĕсемпе ачисене асаплантарса вĕлернĕ.

КĔСКЕН

● Союзниксен наступлени туса пыракан çарĕсене пĕр-пĕринпе лайăхрах сыхăнтарас тесе, Эйзенхауэр генерал хăйĕн ставкине Англирен Франције куçарнă. Çакăнпа пĕрлех тата çапла пĕлтереççĕ: союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Вильсон генерал хăйĕн штабĕпе пĕрле Африкăран Италие куçнă.

● Француз партизанĕсем Брестран 35 миля кăнтăртарахра ларакан Кампер хулине тытса илнĕ. Пĕтĕм Бретанĕпех нимĕç çарĕсем француз партизанĕсемпе тытăça-тытăça илнĕ.

● Гетеборгра (Швеци) пирĕн «Совет Украинишĕн пынă çапăçу» ятлă фильма кăтартаççĕ. Халăх ăна питĕ юратса пăхать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР Наркомлесĕн Улатăрти вăрман техникумĕ вăрман хуçалăхĕ тата вăрман транспорчĕ отделенийĕсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум вăрман хуçалăхĕн техникĕсене тата вăрманти механизациленĕ çулсене тума, юсама тата вĕсемпе усă курма пĕлекен техниксене вĕрентсе кăларать.

Техникумра 4 çул вĕренмелле. Техникума 12 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен вырăс чĕлхипе, литературипе, математикăпа тата СССР Конституцийĕпе экзамен тытмалла. Çиччĕмĕш класран 1943-мĕшпе 1944-мĕш çулсенче отлично вĕренсе тухнисене экзаменсĕрех илеççĕ.

2-мĕш курса вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене тата ытти техникумсен 1-мĕш курсĕнчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Заявленисене августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: а) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне, копине мар); б) хăçан, ăçта çуралнине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне); в) автобиографи; г) виçĕ фотокарточка; д) çар службипе тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна военнообязаннăйсен ямалла); е) сывлăх çинчен калакан справка.

Заявленире мĕнле отделенире вĕренесшĕн пулнине те кăтартмалла.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем августăн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ.

Лайăх вĕренекенсене стипенди параççĕ: 1-мĕш курсра — 80 тенкĕ, 2-мĕш курсра—100 тенкĕ, 3-мĕш курсра — 120 тенкĕ, 4-мĕш курсра — 140 тенкĕ. Пур предметсемпе те отлично вĕренекеннисене 25 процент ытларах параççĕ.

Техникумăн общежити, столовăй тата подсобнăй хуçалăх пур.

Адрес: г. Алатырь, ул. Ленина, 20, Лесотехникум.

Пăла çинчи Тимешре

Çĕрле Пăла енчен кассăн-кассăн нÿрлĕ те сулхăн сывлăш килсе çан-çурăма çÿçентерет. Кун каçиччен ĕçлесе ывăннă колхозниксем тутлăн çывăраççĕ пулĕ тесе шутлама пултарать, тимешсене пĕлмен, ку колхоза тин кăна пынă çын. Анчах та вăл часах хăй нумай çывăрнăшăн кулянса ÿкме пултарать. Тырă вырнă чух тимешсем хăш вăхăтра çывăрнине пĕлме йывăр.

Аслă урама урлă Пăла еннелле сăртран аналла пĕр пĕчĕк урам анать. Колхозниксен пахчисем çумĕнчех çынран çÿллĕ кантăр çĕрлехи тĕттĕмре хуралса ларать. Пĕр сасă та çук. Урам тăрăх пире хирĕç, урине йĕпетме юратман кушак пек çемçе те сыхланарах утса, хĕрарăм пырать.

— Аçта каятăн эсĕ, Ульха, çурçĕр иртни те пĕр сехет кăна-çке тата ĕнер вăйлă çумăр пулчĕ, тырăсем нÿрĕ пулĕ, — терĕ колхоз хуралçи.

— Эпир, хĕвел хăпариччен выратпăр та, хĕвел тухса сарăлсан, вырнă тырăсем типсе çитсен çеç çыхса тĕме хуратпăр, — терĕ О. Портнова юлташ, колхозри паллă звеноводсенчен пĕри.

Часах хĕрачасен пĕчĕк ушкăнĕсем хирелле татти-сыпписĕр кайнине куратăн. Çапла пуçланать ĕçкунĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра. Кунта ĕçе никам та «хăваламасть» те, чĕнмест те, кашни хăй пĕлсе хăй тухать. Çуталиччен нумай маларах уйхирте ĕç пуçланать. Тырă выракан машинăсен сасси çĕрлехи шăплăха хускатать. Машина хыççăн кĕлте çыхакансем те иркÿлĕм, сывлăм типиччен, çурлапа пикенсех выраççĕ.

Шурăмпуç çути сарăлса хăпарать, хĕвел тухиччен ялтан кĕтÿ тухать.

Ача амăшĕсем хăйсен ачисене йăтса е çавăтса яслине васкаççĕ. Колхозра 140 ача вырнаçмалăх ясли пур. Унта вĕсем кăнчченех шанчăклă çынсен аллинче, вĕсем тутă пурăнаççĕ, тасалăхра выляса савăнаççĕ. Ача амăшĕн те чĕри лăпкă, ĕçлес кăмăлĕ та пысăк. Вăл васкасах хирелле утать.

Колхозăн анлă та тулăх тырпуллă хирĕ. Пăла тăрăхĕнчи айлăмра пахча-çимĕçсем çитĕнеççĕ, кантăр чăтлăх вăрман пек сĕрĕтсе ÿсет. Ялăн хĕвеланăç енчен Хурăнвар еннелле сарăлса выртакан ыраш пуссинче ыраш çĕмелĕсем йăввăн ларса тухнă. 240 гектар çинчи ыраша кунта 6 кун хушшинче вырса пухнă та çĕмеле хывнă. Тырпул пухас ĕçе ăнăçлă туса пынăшăн колхоз правленийĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ П. Л. Леонтьев юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригада ыраш кĕлтине капана хывса пĕтернĕ. Çак бригадăн итемĕ çинче патмар капансем улăпсем пек сарăлса лараççĕ. Улттăмĕш бригада та (бригадирĕ С. Портнов юлташ) ыраша пĕтĕмпех капана хывма ĕлкĕрнĕ.

Пирĕн умра кăкăр таран çитĕннĕ тулă пĕр тикĕс, хумханмасăр ларать. Тулă хушшинче пĕр çумкурăк та курма çук. Çĕрелле кăштах усăннă шултăра та сарă пĕрчĕллĕ йывăр пучахсем çинче сывлăм шывĕн тумламĕсем тин кăна тухнă хĕвел çуттипе ахах пĕрчи пек йăлтăраса тăраççĕ.

— Вăт çакă ĕнтĕ пирĕн колхозăн вăрлăхлăх акнă тулă лаптăкĕ,—тет П. Леонтьев юлташ,—кăна тепĕр икĕ кунран çеç выратпăр. Çак тулла пирĕн вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен Анна Ивановна Емельянова звени пăхса çитĕнтернĕ.

— Эсир тулла та вырса пĕтеретĕр иккен, авă унта тулă сурачĕсем, выльăх кĕтĕвĕ пекех, сăра лараççĕ.

— Пĕтессе паянах пĕтмест, 171 гектар тулă сахал мар вĕт, анчах тепĕр кунтан ку участока, паллах, пĕтеретпĕр. Ыран ыраш çапма тытăнса, акмалăх вăрлăх хатĕрлемелле.

Уйра улттă тĕлте Хĕрлĕ ялавсем катаранах курăнса лараççĕ. Çав ялавсем тырпул пухас ĕçре малта пыракан звеносен участокĕсене палăртаççĕ, вăл звеносенче пĕтĕмпех стахановкăсем ĕçлеççĕ.

— Пирĕн колхозри 6 бригадăра 24 звено, анчах та 6-шĕнче кăна Хĕрлĕ ялав, ку вăл ĕнтĕ ялавсем чи лайăх звеносен аллинче пулнине пĕлтерет. Çав звеносенче кулленхи нормăна пĕр-икĕ хут ирттерсе тултарман çынсене тупма çук,— тет колхозри стахановка Агрипина Табакова.

— Эсĕ ху мĕнле ĕçлетĕн, Табакова юлташ?

— Эпĕ вăйлах ĕçлейместĕп, çапах та нормăна 200 процентран кая тултарман,— терĕ вăл кăшт кулса.

Тулă ани çинче кĕлтене кĕмен пĕр пучах та тупма çук, вырасса та вара тĕпĕнчен, çĕр çумĕнченех вырнă.

— Табакова, пăх-ха, ялава Евдокия Баринова звенине куçарчĕç вĕт, пирĕн звено каярах юлчĕ, — терĕ халиччен пĕр сăмах чĕнмесĕр вырнă М. Ахматова, — васкар, эпир каярах юлтăмăр. — Вăл вара каласма пăрахсах вырма тытăнчĕ.

Кунта звено малалла куçнă май ялавсене куçарсах пыраççĕ, çапла вара тырă вырас ĕç кункаçиччен мĕнле пынине тăтăшах сăнаса тăма пулать.

Уйра 6 тĕлте тĕтĕм çÿлелле йăсăрланса хăпарать, унта 12 пысăк хуранпа колхозниксем валли апат пĕçереççĕ. Ялтан, виçĕ пекарнĕрен, вăкăрсемпе лашасем кÿлнĕ урапасемпе уялла çăкăр турттараççĕ.

Çапла вара ирхине 6 сехетре уйрах апат çиеççĕ.

Куçса çÿрекен кухня умĕнче комсомолка Нюра Щербакова ĕçлет. Вăл васкакан, ĕçре каласма юратман, тăпăл-тăпăл та ăшă кăмăллă хĕр.

— Эпир ĕçлекенсене вăхăтра, тутлă апат çитерме тăрăшатпăр. Халиччен те пĕр çын апата тиркени пулман, — тет вăл.

Апат çимелли вырăнта бригадăра тухакан «Боевой листоксем», Хисеп хăми пур, унтах çĕнĕ хаçатсемпе журналсене тата Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчен килекен çырусене илсе пырса параççĕ. Фронтран килекен хыпарсене пĕрле вуласа савăнаççĕ. Акă, А. И. Емельянова юлташ; унăн упăшки—гварди лейтенанчĕ, нумаях пулмасть ăна нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕшĕн «За отвагу» медальпе наградăланă. Емельянова юлташ хăй те вара гвардеец пек ĕçлет, унăн виçĕ ача, анчах вăл кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пырать.

— Эпир, кунта пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе, хамăрăн упăшкасене, тăвансемпе тантăшсене пулăшас тетпĕр. Ирхине вăранан та фронт çинчен, унта пирĕншĕн кĕрешекенсем çинчен аса илетĕн, вара ыйăх та таçта вĕçсе каять, вăй кĕрет, хăвăртрах уя кайса пĕр тĕм те пулин ытларах вырас килет, — тет Емельянова юлташ.

Ирхи апат вăхăчĕ иртрĕ. Колхозницăсем татах ĕçе пикенчĕç. Лăпкă уйхирте çурла сасси, машинăсем кĕрлени кĕрлесе тăрать.

Колхозра 7 жнейка, кашниннех икшер смена ĕçлеççĕ, кашни жнейка валли 4 лаша уйăрнă. Жнейкăсемпе кулленхи ĕç нормине тултарсах пыраççĕ. Колхозри мухтава тивĕçлĕ машинист Петр Никитич Алексеев кунне 6—7 гектар вырать.

— Вăл Отечественнăй вăрçă инваличĕ, вăрçă вучĕ витĕр тухнă çын. Машинăна юсанă çĕрте хăй ĕçлерĕ, çавăнпа ăна лайăх пĕлет. Унăн машини ĕçре чарăнмасть, — тет колхоз председателĕ Василий Васильевич Зайцев.

Колхоз правленийĕ лайăх ĕçлекен бригадăна пама куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав тунă. Çуртырисене кĕске срокра тата лайăх акнăшăн çав ялава 5-мĕш бригадăна (бригадирĕ А. А. Леонтьева юлташ) панă. Анчах та ыраш вырса капана хывас ĕçре 4-мĕш бригада (бригадирĕ П. Леонтьев юлташ) мала тухнă май, куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава Леонтьев юлташ ертсе пыракан бригада илнĕ.

Участоксенчи кашни кунхи ĕçе звеноводсем хăйсен звенисенчи 12 çынран йышăнса тăраççĕ. Звеноводсенчен — бригадир йышăнать. Бригадăн ĕç пахалăхне ятарласа тунă комисси тĕрĕслет. Пахалăх инспекторĕсем пулса ĕçлеме колхозри чи ĕçчен колхозниксене уйăрнă. Вĕсенчен пĕри — 60 çулхи Лаврентий Никифорович Лесников юлташ. Вăл яланах хирте. Пахалăх инспекторĕ, хирте пĕр пучах тăкăнса юлнине тупсан та, паллă тăвать, асăрхаттарать. Юлашкинчен бригадиртан тунă ĕçе колхоз председателĕ В. В. Зайцев юлташ йышăнать.

— Ĕç пахалăхĕ тĕп вырăн йышăнмалла, кашни пĕрчĕ—пучахра, кашни пучах — кĕлтере пултăр, кĕлтене типтерлесе çĕмеле хывсан тин ĕçе йышăнма пулать, — тет Василий Васильевич.

Колхозăн уйхирĕнче сĕлĕ, вир тата ытти тырăсем те тулăх çитĕнеççĕ. Кăçал колхоз вăтамран кашни гектартанах 120—150 пăт тĕштырă туса илес задача лартнă. Çак задачăна пурнăçлас тĕлĕшпе вĕсем хĕллеренех ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Халĕ вĕсем, хăйсен пысăк тухăçлă тыррисене вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртес тесе, кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Вĕсен ĕçĕ ахаль пулас çукки паллă, ăна кашни колхозникпе колхозница хăй куçĕпе курать, савăнать.

Анса пулнă тулăх тырра колхоз амбарне кĕртессишĕн, государствăна, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара тырпул, пахча-çимĕç, аш-какай ытларах та ытларах парса тăрассишĕн, ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне кăçал та хăйсен аллинчех хăварассишĕн кĕрешеççĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри мухтава тивĕçлĕ колхозниксемпе колхозницăсем.

В. ЯСТРЕБОВ,
«Чăваш Коммунин» ятарласа кайнă корреспонденчĕ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 13-мĕшĕнчен пуçласа

КУНСЕРЕНЕХ

саслă илемлĕ çĕнĕ фильм

«ЗЛАТЫЕ ГОРЫ»

кăтартать.

Сеансем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетренех ĕçлеме тытăнать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00683 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59X42 п. л. Тираж 16.000 экз.